# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

7 (7541) № * Юн кун, 2008 ҫулхи январĕн (кăрлач) 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Йышăну

## *Район кунĕ – февралĕн 9-мĕшĕнче*

**Район администрацийĕн пуҫлăхĕн январĕн 23-мĕшĕнчи 45 № йышăнăвĕпе район кунне халалласа районти ĕҫ коллективĕсен представителĕсемпе Муркашсен ентешлĕхĕн членĕсен савăнăҫлă пухăвне 2008 ҫулхи февралĕн 9-мĕшĕнче К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ирттерме палăртнă. Район кунне хатĕрленсе туса ирттерессипе мероприятисен планне те ҫирĕплетнĕ.**

Раҫҫейре

## *Амăшĕн капиталне – ачасене вĕрентме*

РФ Правительстви 2007 ҫулхи раштавăн (декабрь) 24-мĕшĕнчи 926 № йышăнăвĕпе амăшĕн капиталĕн укҫитенкине пĕтĕмĕшле е пĕр пайне ачасене вĕрентме хывмалли йĕркене ҫирĕплетнĕ.

Ҫак укҫа-тенкĕпе ачасене çĕршыври кирек хăш вĕрентӳ учрежденийĕнче те (тӳлевлĕ вĕрентӳ пулăшăвĕ пама ирĕк пуррине) пĕлӳ пама юрать.

Ҫемье капиталĕн укҫипе тăван ывăлхĕре те, усрава илнине те, пĕрремĕш, иккĕмĕш е ун хыҫҫăнхи ачасене те вĕрентме ирĕк пур. Вĕренес текенĕн 25 ҫултан аслă пулмалла мар.

Укҫапа усă курас пирки ыйтса ҫырнă заявление иккĕмĕш е ун хыҫҫăнхи ача ҫуралнă (усрава илнĕ) хыҫҫăн 2 ҫул та 6 уйăх иртсен ҫырмалла. Заявление укҫана ҫулталăкăн 2-мĕш ҫурринче илес тесен ҫу (май) уйăхĕн 1-мĕшĕччен, 1-мĕш ҫуррине илес тесен юпа (октябрь) уйăхĕн 1-мĕшĕччен памалла.

Республикăра

## Патшалăх ҫурт-йĕр фондне тăваҫҫĕ

Тунти кун ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров правительство членĕсемпе канашлу ирттернĕ.

Иртнĕ ҫул пирĕн республика территорийĕнче 1 миллион тăваткал метр ҫурт-йĕр туса лартнă. Кун пекки пулман.

Ҫавăнпа пĕрлех президент ҫурт-йĕр тăвассин хăвăртлăхĕ уйрăмах сахал тупăшлă ҫемьесене ҫырлахтарайманнине палăртнă. Вăл Сергей Галликов премьер-министрăн республикăра пурăнмалли ҫурт-йĕрĕн патшалăх фондне туса хурас шухăшне ырланă. Кунта сăмах тӳлевсĕр приватизаци шутне лекмен фонд пирки пырать. Вăл сахал тупăшлă, пулăшу кирлĕ ҫынсене пурăнмалли ҫурт-йĕр ыйтăвне татса пама май памалла. Малтанлăха шутланă тăрăх, палăртнă президент, ҫак фонда йĕркелеме 1,5 – 2 ҫуллăха 5 миллиард тенкĕ кирлĕ.

## Сĕнӳсем кĕтетпĕр

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне ҫуллен яракан Ҫырăвне хатĕрлеме тытăннă. Президент Ҫырăвĕ – эпир экономикăпа социаллă сферăра пĕрлехи вăйпа туса ирттернĕ ĕҫсене политика тĕлĕшĕнчен хаҫарпа паракан тата аталану тĕллевĕсене палăртакан тĕп документ. Ҫавăнпа пĕрлех вăл – халăхпа кăҫал пурнăҫламалли конкретлă программа хатĕрлесси, республика аталанăвĕн тĕп ҫул-йĕрне, ҫитĕнӳ ҫăл куҫĕсене, ĕҫре тĕл пулакан ҫитменлĕхсене пĕтермелли майсене палăртасси. ЧР ПА пресс-службинчен пĕлтернĕ тăрăх, республикăри массăллă информаци хатĕрĕсем тата влаҫ органĕсем граждансенчен сĕнӳсемпе асăрхаттарусене йышăнма пуҫланă.

Хаклă вулакансем, хăвăра пăшăрхантаракан ыйтусене, сĕнӳсене пирĕн редакцие ярса парăр.

Президент стипендиачĕсем



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Андрей Иванович Степанов район администрацийĕн ял хуҫалăх пайĕн информацисем пухас, йĕркелес тата сарас енĕпе ĕҫлекен тĕп специалисчĕ пулса тăрăшать. Шанса панă ĕҫе ответлăха туйса пурнăҫлать. Обществăлла ĕҫсене те хастар хутшăнать вăл. Ахальтен мар ĕнтĕ Андрей Степанов иртнĕ ҫул итогĕсемпе Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине илме тивĕҫ пулнă.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Ял ҫыннисене пĕлме

## *Налук хумаҫҫĕ*

**ЧР Ял хуҫалăх министерстви ҫапла пĕлтерет:** 2007 ҫулхи июлĕн 24-мĕшĕнчи 216 № Федераллă саккунпа 2008 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен ҫуртйĕр лартма панă субсиди ҫине налук хумаҫҫĕ. Сăмах кунта «Социальное развитие села до 2010 года» федераллă программăпа ялта пурăнакан тата ĕҫлекен граждансене, ҫамрăк специалистсене, ҫемьесене ҫурт-йĕр тума (туянма) уйăракан укҫа пирки пырать.

2003 ҫултанпа республикăра 2,5 пин ҫемье ҫак субсидипе усă курнă. Субсидие ҫурт-йĕр хакĕн 70 процентне саплаштарма уйăраҫҫĕ.

Малтан 30 ҫуллăччен ҫамрăксен ҫес панă... чен ӳстернĕ. Малтан 30 ҫулчченхи ҫамрăксене ҫес панă.

Субсидие ҫамрăк ҫемьесем тата 1 амăшĕпе ача пур ҫемьесем илме пултараҫҫĕ. Ҫемье членĕсен ҫурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кирлине ҫирĕплетмелле. Ҫавăн пекех вĕсен хватерĕн субсиди виҫинчен тухакан ытларах пайне тӳлеме пултарнине ĕнентермелле.

## *35 ҫулччен ҫамрăк ҫемье*

**ЧР Строительство министерстви ҫапла пĕлтерет:** РФ правительствин 2007 ҫулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи 979 № йышăнăвĕпе «Обеспечение жильем молодых семей» хушма программăна хутшăнакан ҫемьесен ӳсĕмне 35 ҫулччен ӳстернĕ. Малтан 30 ҫулчченхи ҫамрăксене ҫес панă.

## *Нотариус вырăнне – ял администрацийĕ*

**ЧР Юстици министерстви ҫапла пĕлтерет:** Раҫҫей юстици министерстви ял ҫыннисене уйрăмах кирлĕ приказ йышăннă. Сăмах кунта нотариус ĕҫсене ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ е ятарлă ирĕк илнĕ должноҫри ҫын ҫине хурасси пирки пырать. Ҫапла вара ял администрацийĕнче документсен копийĕ, аслă пусни, халал хучĕ тĕрĕс пулнине ҫирĕплетме тата ытти нотариус ĕҫсене пурнăҫлама пулать.

Ҫак инструкци кăҫалхи январĕн 15-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ.

Эсир ыйтнипе

## Социаллă услугăсемшĕн тӳлесси ӳсрĕ

РФ Пенси фончĕн районти управленине пенсионерсем тĕрлĕ ыйтусемпе тăтăшах килеҫҫĕ. Нумаях пулмасть Елена Ивановна Петрова ыйтупа пычĕ. «Эпĕ пĕччен пурăнатăп, тыл ĕҫченĕ, ĕҫ ветеранĕ. Упăшка аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ пулнă. Регионсен ҫăмăллăхĕсемпе усă куракансене 2008 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса уйăхсерен хушса тӳлесе тăрасси пирки хаҫатра вуланăччĕ. Федераллă ҫăмăллăхсемпе усă куракансене тӳлесе тăрассинче улшăнусем ҫук-ши?» – тесе ыйтать вăл.

Ҫавна каласа хăварасшăн. Раҫҫей Федерацийĕн Правительствин 2007 ҫулхи августăн 11-мĕшĕнчи 513 № йышăнăвĕпе 2008 ҫулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кашни гражданин пуҫне социаллă пулăшусем шучĕпе уйăхне 549 тенкĕ уйăрма пăхнă.

Вăл шутран 488 тенкĕ – тӳлевсĕр хушма медицина пулăшăвĕшĕн тӳлеме, кунпа пĕрлех медицина пулăшăвĕн стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн врач (фельдшер) рецепчĕсемпе кирлĕ эмел, медицина хатĕрĕсемпе тивĕҫтерме, инвалид ачасене сиплевлĕ апатланăвăн ятарлă продукчĕсемпе тивĕҫтерме, обязательнăй социаллă страховани законодательствипе килĕшӳллĕн медицина кăтартăвĕсем пулсан санаторие курорт сиплевĕн путевкисемпе тивĕҫтерме.

61 тенкĕ вара – сиплев вырăнне ҫитме тата каялла таврăнма хула ҫывăхĕнчи чукун ҫул транспорчĕпе тата хуласем хушшинчи транспортпа усă курнăшăн тӳлеме.

Унччен 2007 ҫулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кашни гражданин пуҫне уйăракан социаллă ҫăмăллăхсем шучĕпе 513 тенкĕ тӳлесе тăнă. Вăл шутран 456 тенкĕ тӳлевсĕр хушма медицина пулăшăвĕшĕн тата 57 тенкĕ транспортшăн тӳлеме.

**С. РОМАНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн пенсисем шутласа парас тата тӳлес, страхланă ҫынсен прависене хак парас енĕпе ĕҫлекен пайĕн специалисчĕ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Ачасем те уява хатĕрленеҫҫĕ

Республика кунне кăҫал Муркашра уявланă май кашниехăна тивĕҫлипе кĕтсе илме тăрăшать.

Районти педагогсемпе вĕренекенсем те уява тивĕҫлипе кĕтсе илме ĕҫ планĕ туса хатĕрленĕ. Халĕ уявра хăйсен пултарулăхĕпе савăнтаракан ăста ачасене палăртассипе тимлеҫҫĕ.

Хушма вĕрентӳ учрежденийĕсенче ачасем хатĕрленĕ чи лайăх сувенирсене суйласа илеҫҫĕ.

Шкулсенче чечек вăррисем туянса хунă ĕнтĕ. Чечек клумбисен эскизĕсене хатĕрлеҫҫĕ.

Ҫамрăк техниксен станцийĕнче уяв кунĕсенче тӳпене ҫĕклеме вĕҫекен ҫĕленсемпе самолетсем ăсталаҫҫĕ.

## Маттур хĕрарăмсем!

Республикăра иртнĕ «Хĕрарăм - ҫултапăк директорĕ» конкурса пирĕн районти пултарулла хĕрарăмсем те хутшăнчĕҫ. Чуманкасси ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Л.Г. Ковалева «Ҫынсемшĕн тăрăшасси» номинацире палăрчĕ. Ярапайкассинчи врач офисĕн ертӳҫи В.Н. Любимова вара конкурсра виҫҫĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ.

Пирĕн икĕ ентеш те конкурсăн Мускаврa иртекен тапхăрне февралĕн 26 – 28-мĕшĕсенче хутшăнаҫҫĕ.

Саламлатпăр та ăнăҫусем сунатпăр!

## Юрă пурнăҫра пулăшать

Оборонăллă-массăллă ĕҫсен уйăхлăхĕн виҫинче патриотла юрăсен конкурсĕ пуҫланчĕ. Унта 7 – 18 ҫулсенчи ачасем, вокалпа фольклор ансамблĕсем хутшăнаҫҫĕ. Пĕрремĕш тапхăрĕ шкулсенче, иккĕмĕшĕ район шайĕнче иртет.

Конкурса хутшăнакансен патриотика темипе ҫырнă халăх юррипе е композиторсем хайланă паянхи юрăсемпе тухмалла. Фольклор ансамблĕсем 10 минутлăх композици хатĕрлеҫҫĕ.

Финал февралĕн 20-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче пулать.

## Право акчĕсен пуххине хатĕрлеҫҫĕ

Муркашри ялсем хушшинчи тĕп библиотека ялти библиотекăсемпе тачă ҫыхăну тытать. Библиотекăсем тĕрлĕ йышши информаци базине йĕркелессипе, вĕсене ҫĕнетсе тăрассипе нумай ĕҫлеҫҫĕ. «Муркашри тĕп библиотека системинчи кĕнекесем» электронлă каталог хатĕрлеҫҫĕ. Тăван таврăлăхпа паллаштаракан «Муркаш енĕ» каталог ҫыраҫҫĕ.

Ҫавăн пекех Муркаш районĕнчи право акчĕсен электронлă пуххине те йĕркелеҫҫĕ. Кунта район администрацийĕн пуҫлăхĕ алă пуснă йышăнусене тата депутатсен районти Пухăвĕ йышăннă документсене кĕртеҫҫĕ. Документсемпе хут ҫинче те, компьютер урлă та паллашма май пулать.

## Ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсем канашлаҫҫĕ

Февралĕн 1-мĕшĕнче ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен районти канашлăвне ирттерме палăртнă. Чи малтанах унта РФ Президенчĕн суйлавĕпе, Район кунне хатĕрленсе ирттерессипе, Ҫемье ҫултапăкĕпе тата Ырă ĕҫсен ҫултапăкĕпе ҫыхăннă мероприятисене планлассипе тата туса ирттерессипе, ял тăрăхĕсенчи халăхи вăхăтри ҫыхăну шайĕпе, художество пултарулăх коллективĕсен смотр-конкурсне ирттерессипе ҫыхăннă ыйтусем тĕп вырăнта пулĕҫ.

**А. ТИХОНОВ, В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Суйлав умĕн

## *Шăпа туртнин итогĕсем*

Январĕн 29-мĕшĕнче 10 сехетре райхаҫат редакцийĕнче РФ Президентне суйланакан кандидатсен агитаци материалĕсене тӳлевлĕ йĕркепе вырнаҫтармалли лаптăксене палăртассипе шăпа туртнă.

Унăн результачĕсем ҫапла:

-Зюганов Г.А. кандидат валли 980,5 тăваткал сантиметр таран лаптăка февралĕн 23-мĕшĕнчи номерте уйăраҫҫĕ;

Медведев Д.А. кандидат валли 980,5 тăваткал сантиметр таран лаптăка февралĕн 27-мĕшĕнчи номерте уйăраҫҫĕ.

Материалсене редакцие 3 кун маларах тăратмалла, вĕсене пичетленĕшĕн укҫана 2 кун маларах кандидат фончĕнчен тӳлемелле.

**Райхаҫат редакцийĕ.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*

Юратнă мăшăра, аннене, аппана, кине – Вомпăкасси ялĕнче пурăнакан **Галина Михайловна КОЛЬЦОВАНА** 55 ҫулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пуррипе савăнатпăр. Сан ялан хавас кăмăл пултăр, питкуҫунта ҫепĕҫ кулă ҫиçтĕр. Утас ҫулу такăр пултăр.

Ан чирле, ан вăтăл нихăҫан,
Пул хаваслă, кăмăллă ялан.
Эс пирĕншĕн – чи хаклă ҫын!
Ырри никам та ҫук санран!

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 3 мăнукĕ, Салдыркинсен, Романовсен тата Пахомовсен ҫемйисем.**